Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнченпе тухать

50 (8116) № ✻ Шăмат кун, 2013 çулхи утă (июль) уйăхĕн 13-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

## Хастарлăхĕ иксĕлми

*Ирхи 5 сехет çурă. Чылайăшĕ тутлă ыйхăра. Муркаш почтамчĕн сортировка уйрăмĕнче вăй хуракансем вара ĕçе кӳлĕннĕ ĕнтĕ. Ара, Етĕрнепе Муркаш районĕсенчи подписчиксем валли çыхăну уйрăмĕсем тăрăх валеçме район хаçачĕсене, республика изданийĕсене, çырусемпе бандерольсене, посылкăсене 8 сехетчен шутласа уйăрса тухма ĕлкĕрмелле вĕт-ха.*

*Ĕç калăпăшĕ те пĕчĕкех мар. Район хаçачĕсен пĕрлехи тиражĕ кăна 9 пин экземпляр ытла, кунсăр пуçне республикăри хаçат-журнал кунсерен 5 – 7 пин экземпляр килет, заказлă тата ахаль çырусем пĕршер пине яхăн. Механизаци çук, пĕтĕмпех алă вĕççĕн шутласа уйăрас пулать.*

*Эсир сăн ӳкерчĕкре куракан Антонина Даниловăпа Елизавета Чернова сортировщицăсем хăйсен тивĕçне ответлăха туйса пурнăçлаççĕ. Йывăр тесе нăйкăшма хăнăхман вĕсем.*

**В. ШАПОШНИКОВ сăн ӳкерчĕкĕ.**

Ыран – Раççей почтин кунĕ



**ПОЧТА ÇЫХĂНĂВĔН ХИСЕПЛĔ ĔÇЧЕНĔСЕМ ТАТА ВЕТЕРАНĔСЕМ!**

Сире професси уявĕпе – Раççей почтин кунĕ ячĕпе чĕререн саламлатăп!

Почта çĕршер çул хушши çынпа уйрăлми тачă çыхăннă, чи массăллă та пурте усă курма пултаракан çыхăну тĕсĕсен социаллă пысăк пĕлтерĕшлĕ функцине пурнăçлать.

Информаци технологийĕсемпе усă курни почтăна хăйĕн клиенчĕсене паракан услугăсен шутне чылай хут ӳстерме май пачĕ. Паянхи почта вăл – пĕр-пĕринпе хутшăнмалли хатĕр кăна мар, экономикăн пĕлтерĕшлĕ пайĕ те.

Почта ĕçченĕсен пысăк профессионализмĕ тата производство процесне кирлĕ пек йĕркелени Чăваш Ен почта çыхăнăвĕн ĕçне-хĕлне малашне те ăнăçлă туса пыма май парасса шанса тăратăп.

Почта ĕçченĕсемпе ветеранĕсене чун-чĕререн çирĕп сывлăх, ĕçре ӳсĕмсем, телей тата ăнăçу сунатăп.

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил ИГНАТЬЕВ.**

**ПОЧТĂН ХИСЕПЛĔ ЕÇЧЕНĔСЕМ ТАТА ÇАК ĔÇĔН ВЕТЕРАНĔСЕМ!**

Сире пурне те хăвăрăн професси уявĕпе – Раççей почтин кунĕ ячĕпе саламлатăп.

Эсир район çыннисем пурнăçран пĕр утăм та ан юлчăр тесе тимлетĕр: тĕрлĕрен хаçат-журнал çырăнтаратăр, вĕсемпе вăхăтра тивĕçтерсе тăратăр. Районта, республикăра, Раççейре, тĕнчере пулса иртекен хыпарсене вулакансем патне çитеретĕр. Çавăн пекех çынсене савăнăç кӳретĕр: эсир илсе пыракан çывăх çынсемпе тăвансен саламĕсене, çырăвĕсене, парнисене кашни килтех хавас.

Пурнăç улшăннăçемĕн эсир паракан пулăшусен шучĕ те ӳссех пырать: пенси укçине вăхăтра паратăр, Интернет çыхăнăвĕпе, ытти тĕрлĕрен тӳлевлĕ пулăшусемпе тивĕçтеретĕр çынсене.

Тавах сире хăвăрăн тивĕçĕре чун-чĕре хушнă пек пурнăçланăшăн, районăн социаллă пурнăçĕпе экономика аталанăвĕшĕн тăрăшнăшăн.

Пурсăра та çирĕп сывлăх, телей сунатăп. Ĕçĕрсем яланах ăнса пыччăр. Çемйĕрсенче килĕшӳпе юрату, тату пурнăç пултăр.

**В. АНАНЬЕВ, район администрацийĕн пуçлăхĕн тивĕçĕсене пурнăçлаканĕ.**

Почтăн хисеплĕ ĕçченĕсем!

**Сире професси уявĕпе мĕн пур кăмăлтан саламлатпăр. Кулленхи ĕçре ӳсĕмсем, çемйĕрсенче килĕшӳпе тăнăç пурнăç сунатпăр.**

**«Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата вулакансем хушшинче сарассипе малашне те çине тăрса ĕçлессе шанатпăр. Район хаçачĕн тиражĕ çуллен ӳссе пыни çакна çирĕплетет те.**

**Тепĕр хут уяв ячĕпе саламлатпăр! Телейлĕ пулăр!**

**Райхаçат ĕçченĕсем.**

Университиадăра

## Ăнăçлă ăмăртаççĕ

Иртнĕ шăмат кун Хусанта уçăлнă Универсиадăра чăваш хĕрĕсем ăнăçлă ăмăртаççĕ.

Июлĕн 7-мĕшĕнче Алина Прокопьева 10 пин метра чупса кĕмĕл медаль çĕнсе илчĕ. Наталья Пучкова вара пиллĕкмĕш вырăна тухрĕ.

Июлĕн 10-мĕшĕнче Ирина Юманова 20 километра утса кĕмĕл медале тивĕçрĕ.

Пирĕн Вера Соколова та медаль çĕнсе илме пултаратчĕ. Вăл та малтисен йышĕнче пынă. Анчах ăна виçĕ хутчен асăрхаттарнă хыççăн дистанцирен кăларнă.

Марина Пандакова хăйне япăх туйнăран старта тухаймарĕ.

Асăннă 20 километра утса малти вырăнсене пурне те Раççей хĕрĕсем йышăннă. 1-мĕшне – Мордва Республикинчи Анися Кирдяпкина, 2-мĕшне – пирĕн Ирина Юманова, 3-мĕшне – Челябинскри Лина Бикулова. Çапла вара команда йышĕнчи пĕтĕмлетӳпе те Раççей хĕрĕсем ылтăн медале тивĕçнĕ. Çав шутра – пирĕн Вера Соколова та.

Июлĕн 12-мĕшĕнче Алина Прокопьева çурма марафона (21 км та 97,5 м) чупса кĕмĕл медаль çĕнсе илчĕ.

Саламлатпăр, малалли стартсенче ăнăçусем сунатпăр!

## Тăлăх ачасем пулăшусăр юлмĕç

Указ

Кăçалхи июлĕн 10 мĕшĕнче Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев «Чăваш Республикинче тăлăх ачасене тата ашшĕ-амăшĕн асăрхавĕсĕр юлнă ачасене хӳтĕлес сферăра патшалăх политикине пурнăçламалли хушма мерăсем çинчен» 68 № Указа алă пуснă. Вăл официаллă майпа пичетлесе кăларнăранпа 10 кун иртсен вăя кĕрет.

Документăн тĕп тĕллевĕ – тăлăх тата ашшĕ-амăшĕн ăшшисĕр юлнă ачасене вырнаçтарма, воспитани илме, вĕсене пăхса ӳстерме çемьесене илме меллĕрех майсем туса парасси. Ку енĕпе тĕллевлĕ мерăсем пăхса хунă. Çавăнпа пĕрлех граждансем ачасен çак категорийĕ çинчен калакан информаципе усă курмалли майсене анлăлатмалла, опекăпа попечительлĕх ĕçхĕлĕн пахалăхне, ачасене социаллă пулăшу, медицина пулăшăвĕ парассине лайăхлатмалла.

Республикăра ача усрава илнĕ граждансене пĕр хут укçан паракан пособи çинчен калакан саккуна улшăнусем кĕртме сĕннин пĕлтерĕшĕ пысăк. Вĕсемпе килĕшӳллĕн çак вăхăтченхи 300 пин тенкĕпе танлашакан тӳлеве 375 тенкĕ таран пысăклатаççĕ. Çавăн пекех усрава илнĕ ачашăн уйăхсерен тӳлесе тăракан пособи виçи те пысăкланать.

Асăннă указ граждансем тăлăх тата ашшĕ-амăшĕ пăхман инвалид ачасене усрава илес тĕлĕшпе хушма условисем йĕркелеме пулăшма тивĕç.

**Н. ДМИТРИЕВ.**

Районта

## Диплома тивĕçнĕ

Кăçалхи июлĕн 9-мĕшĕнче ытти муниципалитет йĕркеленĕвĕсемпе пĕрле Муркаш район администрацине те регионсем хушшинчи «Регионсем – килĕштерсе ĕçлессин чикки çук» XX выставкăна активлă хутшăннăшăн Чăваш Республикин экономика аталанăвĕн, промышленноç тата суту-илӳ министерстви Диплом парса хавхалантарнă.

Аса илтеретпĕр, выставка Шупашкарта «Контур» заводăн суту-илӳпе выставка центрĕнче июнĕн 20 – 23-мĕшĕсенче ĕçленĕччĕ. Муркашсен экспозицийĕнче «Сеспель» предприяти, Муркашри кирпĕч завочĕ, Муркашри чăх-чĕп фабрики, «Сежина» общество тата ыттисем хăйсемпе, туса кăларакан продукципе туллин паллаштарнă.

**Хамăр инф.**

Çыхăнусем

## Юсав центрĕ уçасшăн

Июлĕн 9-мĕшĕнче Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Тĕп Азипе Раççейăн «Сименс АГ» вице-президенчĕпе, «Сименс» компанин президенчĕпе Дитрих Меллерпа тĕл пулнă. Унта республика Правительствин ытти ответлă ĕçченĕсем те хутшăннă. Сумлă хăна республикăна ĕçлĕ визитпа килнĕ.

Калаçăва хутшăнакансем медицина, электротехника тытăмĕнчи ыйтусене сӳтсе явнă. Дитрих Меллер хăйĕн сăмахĕнче Чăваш Республики лайăх аталанса пыракан регионсен шутĕнче пулнине палăртнă, «Сименс» компанишĕн республика инвестици хывма тата таварсене вырнаçтарма май паракан стратеги пĕлтерĕшлĕ объект шутланнине каланă. Çавăн пекех вăл çамрăксене инженер профессине алла илме явăçтаракан политикăна ырланă.

Килнĕ хăна республикăри сывлăх сыхлавĕн тытăмне те пысăк тимлĕх уйăрнă. Çитес вăхăтра вĕсем медицина хатĕрĕсене юсама центр хута ярасси çинчен те калаçу хускатнă. Компани президенчĕ центрта медицина персоналне вĕсем туса кăларакан хатĕрсемпе ĕçлеме вĕрентекен вырăн та уçасшăн.

Саламлатпăр

Шуркасси ялĕнче пурăнакан **Геннадий Михайлович БАРДАСОВА** 80 çул тултарнă ятпа ăшшăн саламлатпăр. Вăрăм ĕмĕр, çирĕп сывлăх, канлĕ ватлăх сунатпăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ Клава, кинĕ Оля, Вова, Евăпа Саша, Аня, Манефа.**



Хаклăран та хаклă çыннăмăра, юратнă мăшăра, аннене, асаннене, ырă кăмăллă кукамая, ват кукамая, хунямана, çывăх тăвана – Çĕньял Муркаш ялĕнче пурăнакан **Роза Захаровна СКВОРЦОВĂНА** 80 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр. Чăваш сурпанĕ пек вăрăм ĕмĕр, çăл куç пек тапса тăракан вăй-хăват, çирĕп сывлăх тата иксĕлми телей сунатпăр. Эсир аттепе иксĕр пурри – питĕ пысăк пуянлăх, савăнăç, телей. Турри сире малалла пурăнма татах та вăй-хал парнелетĕр, чир-чĕртен упраса тăтăр. Эпир сире пурте юрататпăр, хисеплетпĕр, сирĕнпе мухтанатпăр. Тавтапуç сире пуриншĕн те.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, ывăлĕсемпе кинĕсем, мăнукĕсем, кĕçĕн мăнукĕсем, çывăх тăванĕсем.**



Чи хаклă çыннăмăра – аннене, хунямана, мамака – Сосновка ялĕнче пурăнакан **Раиса Григорьевна НИКИТИНĂНА** 80 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн саламлатпăр. Ырлăх-сывлăх, иксĕлми телей, вăрăм кун-çул, канлĕ ватлăх сунатпăр. Турри вăй-хал парса тăтăр, чир-чĕртен упратăр. Эсĕ пирĕншĕн – хĕвел çути, чун уççи. Эпир сана юрататпăр, санпа мухтанатпăр, сана хисеплесе çĕре çити пуç таятпăр.

**Саламлаканĕсем: 2 ывăлĕ, 2 кинĕ, 5 мăнукĕ, тăванĕсем, пускилĕсем.**

Пирĕн юратнă çыннăмăра – Кашмаш ялĕнче пурăнакан **Клава Апполинаровна ПЕРЛОВĂНА** 55 çул тултарнă ятпа пур кăмăлтан ăшшăн саламлатпăр. Пире татах нумай çул савăнтарса пурăнма вăрăм ĕмĕр, çирĕп сывлăх, пур çĕрте те ăнăçу сунатпăр. Эпир сана пурте юрататпăр, хисеплетпĕр. Умри çулу санăн яланах анлă та çутă, такăр пултăр. Эпир санпа мухтанатпăр, эс пурришĕн савăнатпăр.

**Саламлаканĕсем: хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем, ывăлĕ, мăнукĕсем, тăванĕсем.**

Июлĕн 14-мĕшĕ – Раççей почтин кунĕ

# Ответлă ĕçĕн хастар ĕçченĕсем

**Ыран федераци почта çыхăнăвĕн Чăваш Республикинчи управленийĕн Муркаш почтамчĕн коллективĕ хăйсен професси уявне – Раççей почтин кунне паллă тăвать. Мĕнпе сывлать, мĕнле пурăнать, пĕтĕмĕшле мĕнле кăтартусемпе кĕтсе илет уява коллектив? Çавăн пирки каласа пама ыйтрăм Муркаш почтамчĕн пуçлăхне Нина ПРАВДИНĂНА.**

**– Нина Игнатьевна, пĕлетĕп, эсир туса пыракан ĕç нумай енлĕ те кăткăс, унăн пĕлтерĕшĕ те пысăк. Коллектив умри задачăсене мĕнле татса парать-ха, пĕрремĕш çур çула вĕçленĕ май мĕнлерех кăтартусемпе кĕтсе илетĕр хăвăрăн професси уявне?**

– Уяв уявах. Пирĕн пурин те паян кăмăл-туйăм çĕкленӳллĕ. Ăнсăртран теместĕп. Сăлтавĕсем те çук мар. Акă июлĕн 5-мĕшĕнче республика шайĕнче пĕрлехи канашлу иртнĕччĕ. Федераци почта çыхăнăвĕн Чăваш Республикинчи управленийĕн ертӳçин тивĕçĕсене пурнăçлаканĕ Владимир Тимофеев кăтартуллă ĕçлесе пыракан почтамтсен коллективĕсене ырăпа палăртрĕ. Вĕсем хушшинче Муркашсене пĕрремĕш асăнни хăех пирĕн ĕçе пысăка хурса хакланине çирĕплетет.

Чăннипех те ĕнтĕ пĕрпĕрне ăнланса ĕçлесе пынипе коллектив кăçалхи пĕрремĕш çур çулти план-заданисене чыслăн пурнăçлама пултарчĕ. Иртнĕ çулхи çав вăхăтрипе танлаштарсан хамăрăн клиентсене услугăсемпе тивĕçтерессин тата тĕрлĕ тавар сутассин калăпăшне 7 процент ӳстерме пултартăмăр. Почта çыхăнăвĕн уйрăмĕсенче çынсене куллен кирлĕ таварсем, лотерея билечĕсем сутассипе нихăçанхинчен те ӳсĕмлĕрех ĕçлерĕç. Халăха кăçалхи иккĕмĕш çур çул валли хаçат-журнал çырăнтарас тĕлĕшпе плансене тираж енĕпе те, тупăш илес енĕпе те ирттерсе тултартăмăр.

Май килнипе усă курса периодика изданийĕсемпе туслă пулма тăрăшакан клиентсене пысăк тав сăмахĕ калас килет. Ку енĕпе Муркашсем – республикăра та малтисенчен пĕрисем.

Почта çыхăнăвĕ паянхи кун та миллионшар çыннăн коммуникацин меллĕ те шанчăклă хатĕрĕ пулса юлать. Урамра 30 градус сивĕ-и е çумăр лӳшкет, чăтма çук шăрăх е чĕркуççи таран пылчăк – кирек епле условисенче те Раççей почти хăйĕн тивĕçне пурнăçлатех, адресатсем патне çитетех. Халĕхи чи çĕнĕ çыхăну мелĕ те чăхăмлама, авари сотовăй е спутник çыхăнăвне стройран кăларма, Интернета сӳнтерме пултарать. Патшалăх почтишĕн кăна ку вăл сăлтав мар: кирек мĕн пулсан та почта ĕçлĕ, çырусем те адресатсем патне çитĕç.

**– Чи кăтартуллă, ыттисемшĕн тĕслĕх пулса тăракан коллективсене уяв умĕн ятран асăнсан та ытлашши мар пулĕ?**

– Вĕсем пирĕн сахал мар. Тĕрĕссипе вĕсенчен килет те ĕнтĕ пĕрлехи ăнăçу та. Акă илер-ха почта çыхăнăвĕн Етĕрне районĕнчи Мăн Явăшри уйрăмне. Коллектива Галина Алексеева ертсе пырать. Кунти çыхăну ĕçченĕсем кварталсерен плансене 135 – 138 процент пурнăçлама вăй çитереççĕ. Чыспа хисепе тивĕçнисем хушшинчех почта çыхăнăвĕн Етĕрне районĕнчи Пушкăртри (ертӳçи Надежда Гаврилова), Засурскинчи (Валентина Айватрова), Ирçери (Татьяна Кузьминых), Урпашри (Ольга Ильина), Кивĕ Тинкешри (Любовь Андреева), Муркашри (Эльвира Репина) уйрăмĕсем. Çавăн пекех Етĕрне районĕнчи Чирĕккассинчи (Лариса Петрова), Янăмри (Альбина Чернова), Муркаш районĕнчи Ярапайкассинчи (Людмила Жирнова), Шурчари (Алена Антонова), Ваçкассинчи (Августина Степанова), Шетмĕпуçĕнчи (Альбина Павлова), Ярославкăри (Тамара Сиротина), Йӳçкассинчи (Эльза Алексеева) çыхăну уйрăмĕсем те ырă ята тивĕçлĕ.

**– Нина Игнатьевна, уяв умĕн тĕрлĕрен наградăсене тивĕçнисем те пулчĕçех пулĕ?**

– Ку çаплах. Почта çыхăнăвĕн Кивĕ Тинкешри уйрăмне ертсе пыракан Любовь Андреева почта услугисен рынокне аталантарассипе çине тăрса ĕçленĕшĕн тата Раççей почтин кунĕ ячĕпе «Раççей почти» федераци патшалăх унитарлă предприятин Хисеп грамотине, Муркашри уйрăм почтальонĕ Юрий Гордеев «Раççей почти» федераци патшалăх унитарлă предприятин Тав хутне тивĕçрĕç. Почта çыхăнăвĕн Чăваш Республикинчи управленийĕн Тав хучĕсене илнисем хушшинче Йӳçкасси уйрăмĕнчи Валентина Анисимовăпа Кивĕ Тинкеш уйрăмĕнчи Елена Ефимова почтальонсем. Сăмах май Валентина Егоровна ответлă та халăхшăн пĕлтерĕшлĕ почтальон ĕçĕнче 32 çул тăрăшать. Çамрăксен районти уявĕнче Муркаш почтамчĕн ертсе пыракан экономисчĕ Ирина Павлова район администрацийĕн пуçлăхĕн Тав хутне илме тивĕç пулни нумай çамрăксене татах тăрăшарах ĕçлеме хавхалантарать.

Пирĕн патра вăй хуракансем ĕçре тăрăшуллă пулнипе пĕрлех коллективăн общество пурнăçне те активлă хутшăнаççĕ. Акă Шетмĕпуçĕнчи уйрăм пуçлăхне Альбина Павловăна, Етĕрнери уйрăм пуçлăхĕн çумне Полина Коноваловăна тава тивĕçлĕ ĕçшĕн тата профсоюз ĕçĕ-хĕлĕнче хастар пулнăшăн çыхăну ĕçченĕсен профсоюзĕн республикăри комитечĕн Хисеп грамотипе наградăланă. Муркаш почтамтĕнче вăй хуракансен профсоюз комитечĕн председательне Нина Аргандеевăна вара профсоюз организацийĕсен Чăваш Республикинчи канашĕн Хисеп грамотине парса чыс тунă.

**– Кирек епле коллективра та унччененех çирĕпленнĕ ырă йăлайĕркесем пурах. Вĕсем те пĕрлехи кăмăл-туйăм, ĕçри тăрăшулăх çине витĕм кӳреççех. Кун пирки мĕн каласа пама пултаратăр хаçат вулакансене?**

– Уççăнах калатăп. Хастартарах, пуçаруллăрах ĕçлеме коллективăн кăмăл пысăк. Федераци почта çыхăнăвĕн республикăри управленийĕ тăрăшнипе юлашки çулсенче почта çыхăнăвĕн уйрăмĕсенче кулленхи юсав ĕçĕсем сахал мар туса ирттернĕ, реконструкци тунă, çĕнĕ оборудовани вырнаçтарнă. Ĕç условийĕсем те лайăхланса пыраççĕ. Кăçалхи январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса ĕç укçине пурнăçланă ĕç калăпăшне кура тӳлеме тытăннă май унăн шайĕ палăрмаллах ӳсрĕ. Иртнĕ çулхи çав вăхăтрипе танлаштарсан халĕ вăл вăтамран 4 пин тенкĕ пысăкрах.

Коллективлă килĕшӳре пăхса хăварнă пек пĕчĕк тупăшлă çемьесене çуллен пĕр уйăх шалăвĕ чухлĕ укçа уйăрса парса пурлăх тĕлĕшĕнчен пулăшатпăр. Почта ĕçĕн ветеранĕсене çулленех Çĕнтерӳ кунĕпе, Раççей почтин кунĕ ячĕпе саламласси ырă йăлана кĕнĕ. Халĕ те Раççей почтин кунĕ ячĕпе 129 пенсионера пурлăх тĕлĕшĕнчен хавхалантарма май тупрăмăр. Ку ытла 15 çултан кая мар почта системинче ĕçлесе пенсие тухнисем.

Çавăн пекех коллективлă килĕшӳре çыхăну ĕçченĕсен профсоюзĕн республикăри комитечĕ çывăх тăванĕсене юлашки çула ăсатма пулăшассине те пăхса хунă. Вĕсене 3-шер пин тенкĕрен кая мар уйăрса паратпăр. Кунсăр пуçне пулăшу кирлисене вара 10 пин тенкĕ таран çур çуллăха процентсăр кредит та парса пулăшатпăр.

Раççей почти çамрăксене вĕренме, аслă пĕлӳ илме пур майсене те туса пама тăрăшать. Тӳлевлĕ вĕренӳ отпускĕсем паратпăр. Апла пулин те 30 çула çитмен çамрăксем пирĕн патра 21,5 процент кăна-ха. Коллективра вара 206 çын. Çавăнпа та çамрăк кадрсене çыхăну ĕçне явăçтарасси пирĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ задачăсенчен пĕри пулса тăрать.

**– Пурнăç пĕр вырăнта тăмасть. Хăвăр ĕçĕрти ырă улшăнусене палăртса хăварсамăр?**

– Хăвăрт çĕнелсе улшăнса пырать почта çыхăнăвĕн ĕçĕ-хĕлĕ те. Унччен кам шухăшлама пултарнă-ха акă çĕр-шывăн пĕр кĕтесĕнчен ярса панă укçа переводне тепĕр кĕтесре пĕр сехет хушшинче илме пултарасса?

Раççей почтин тĕп задачисем – рынок ыйтăвĕсене туллинрех тивĕçтересси, клиентсене паракан услугăсен пахалăхне лайăхлатса пырасси, корреспонденцисене адресатсем патне çитерессине хăвăртлатасси. Умри малашлăхри задачăсем шутĕнче вара – Интернет урлă сутă тăвассине анлăн йĕркелесси, çынсене электрон услугисемпе, укçа-тенкĕ парас-илес ĕçе туллин тивĕçтересси. Çывăх вăхăтрах почта çыхăнăвĕн уйрăмĕсенче патшалăх тата муниципалитет услугисене тивĕçтерессине йĕркелеме хатĕрленетпĕр. Опыт пур, Мари Республикинче ку енĕпе ăнăçлă ĕçлесе пыраççĕ.

**– Нина Игнатьевна, хамăр калаçăва вĕçленĕ май юлашкинчен тата мĕн каласа хăварас кăмăлăр пур?**

– Эпир, почта çыхăнăвĕн ĕçченĕсем, пирĕн ĕç епле ответлă та пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине, паянхи ĕçе ырана хăварма май çуккине аван ăнланатпăр. Малашне те çыру-корреспонденцисемпе периодика пичечĕн изданийĕсене кашни адресат, подписчик патне вăхăтра çитерме тăрăшăпăр. Пенсионерсене пенсие вăхăтра тивĕçтересси те пирĕн тĕп тивĕç шутĕнчех. Раççей почтин ыйтнисене тивĕçтерсе çыхăну уйрăмĕсенче малашне те клиентсене кăмăллă кĕтсе илсе вĕсен мĕн пур ыйтăвĕсене хăвăрт та пахалăхлă татса парассишĕн çине тăрăпăр. Тухса çӳреймен ватăсене килĕсенчех кирлĕ таварсемпе тивĕçтерĕпĕр. Яланхи пекех вĕсен кулленхи пурнăçпа çыхăннă вуншар ыйтăвне татса пама пулăшăпăр. Вĕсем вара сахал мар, эсир ăна лайăх пĕлсе тăратăр.

Пирĕн ĕç-хĕл пур чухне куранса та каймасть. Анчах та кашни çыннăн пурнăçĕ мĕнле майпа та пулин почтăпа çыхăннă. Çавăнпа та Муркашпа Етĕрне районĕсенче пурăнакансене çапла чĕнсе каласшăн: нумай чухне конкуренцие çĕнтерме чăннипех те кĕрешме тивет. Хăвăрăн ку е вăл тăвăра татса панă чухне яланах Раççей почти майлă йышăну тума тăрăшăр.

Почта çыхăнăвĕн хаклăран та хаклă ĕçченĕсем, ĕç ветеранĕсем, пирĕн клиентсем, хаçат-журнал çырăнса илекенсем! Пурсăра та сире çитсе килекен Раççей почтин кунĕ ячĕпе чунчĕререн саламлатăп, ырлăхсывлăх, телей, ĕçре ăнăçу, çитĕнӳсем, пурнăçра телей сунатăп.

**В. ШАПОШНИКОВ калаçнă.**

# Йышлă çемье – туслă çемье



*Çапла шутлаççĕ эсир сăн ӳкерчĕкре куракан Надежда Юрьевнăпа Вячеслав Лаврентьевич Грачевсем. Вĕсем Муркашран, Вячеслав Муркашри пушар чаçĕнче вăй хурать. Июлĕн 3-мĕшĕнче республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьевич Мăн Сĕнтĕрте информаци культурăн çĕнĕ центрне уçнă ятпа ирттернĕ савăнăçлă мероприятие хутшăннăччĕ. Çавăн чухне Михаил Васильевич Грачевсене çемьере виççĕмĕш ача çуралнă ятпа саламларĕ, ача амăшĕн (çемье) республика капиталĕн сертификатне парса чыс турĕ.*

**В. ШАПОШНИКОВ сăн ӳкерчĕкĕ.**

Райадминистрацире

## Хисеп грамотипе наградăланă

Район администрацийĕн 2013 çулхи июнĕн 26-мĕшĕнчи 693 № йышăнăвĕпе çаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:

1. Çитĕнекен ăрăва вĕрентсе воспитани парассипе тунă çитĕнӳсемшĕн тата нумай çул хушши тăрăшса вăй хунăшăн:

– **Римма Владиславовна ПРОКОПЬЕВĂНА,** Мăн Хураçка шкулĕн математика учительне;

– **Вера Алексеевна ФЕДОТОВĂНА,** 29 № «Незабудка» ача сачĕн заведующине.

2. Ял хуçалăх продукцине тирпейлекен отрасльте нумай çул хушши тăрăшса вăй хунăшăн – **Алина Георгиевна ВАСИЛЬЕВĂНА,** чикĕллĕ яваплăхлă «Молочный завод «Моргаушский» обществăн тĕп бухгалтерне.

3. Районти пĕчĕк тата вăтам предпринимательствăна аталантарма тӳпе хывнăшăн – **Владимир Дмитриевич ПАЛАДЬЕВА,** уйрăм предпринимателе.

4. Ĕçре çитĕнӳсем тунăшăн тата обществăлла ĕçе активлă хутшăннăшăн:

– **Светлана Николаевна ДАШКОВĂНА,** 3 № «Солнышко» ача сачĕн воспитательне;

– **Алина Александровна ДИМИТРИЕВĂНА,** Йӳçкассинчи информаципе культура центрĕн ялти библиотека заведующине;

– **Наталья Алексеевна МИХАЙЛОВĂНА,** Тойкилтĕ шкулĕн директорĕн вĕрентӳпе воспитани парас енĕпе çумне;

– **Антонина Михайловна МИХЕЕВĂНА,** И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн студентне;

– **Алина Валерьевна НИКОЛАЕВĂНА,** районти тĕп больницăн референт секретарьне;

– **Алина Владимировна НИКОЛАЕВĂНА,** «Моргаушское» пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх муниципаллă унитарлă предприятин бухгалтер-кассирне;

– **Ольга Юрьевна ПРОКОПЬЕВĂНА,** 27 № «Путене» ача сачĕн воспитательне;

– **Ирина Арсентьевна ЯКОВЛЕВĂНА,** Йӳçкасси шкулĕн музыка учительне.

Республикăра

## Парăм чакать

Республика финанс министерствин даннăйĕсем тăрăх 2013 çулхи июлĕн 1-мĕшĕ тĕлне республика бюджетне налук тупăшĕ 8819,3 млн тенкĕ пухăннă. 2012 çулхи çав вăхăтрипе танлаштарсан ку вăл 5,5 процент нумайрах.

Уйрăм çынсен тупăшĕнчен илекен налук калăпăшĕ 2660,7 млн тенкĕпе (8,6 процент нумайрах) танлашнă. Таварсен акцизĕсенчен 1670,7 млн тенкĕ (10,7 процент) тупăш илнĕ. Организацисен тупăшĕнчен пуçтарăнакан налук 2384,2 млн тенкĕ пулнă, пĕлтĕрхи çав вăхăтринчен 10,4 процент чакнă.

Июлĕн 1-мĕшĕ тĕлне республика бюджетĕнчен 15193,3 млн тенкĕ (çулталăк планĕн 40,5 проценчĕ) тăкакланă. Вăл шутран социаллă политика валли – 3645,4 млн тенкĕ (47,4 процент), вĕренӳ сфери валли – 4224,2 млн тенкĕ (50,4 процент), сывлăх сыхлавĕ валли – 3108 млн тенкĕ (48 процент), наци экономики валли – 2244,9 млн тенкĕ (33,6 процент).

Чăваш Республикин патшалăх умĕнчи парăмĕ июлĕн 1-мĕшĕ тĕлне 7760,3 млн тенкĕпе танлашнă, çулталăк пуçламăшĕнчипе (10208,6 млн тенкĕ) танлаштарсан 2448,3 млн тенкĕ е 24 процент пĕчĕкленнĕ.

Конкурс

## «Хăрушлăхсăр çĕр-шыв»

Раççей чрезвычайлă лару-тăру министерстви ӳкерчĕксен «Хăрушлăхсăр çĕр-шыв» конкурсĕ валли материалсем йышăнать. Конкурса Пĕтĕм Раççейри «Хăрушсăрлăх культури» вĕренӳ проекчĕпе килĕшӳллĕн ирттереççĕ.

Конкурса «Хăрушсăрлăх культури» проекта хутшăнакан вĕренӳ учрежденийĕсенче ăс пухакан 6 – 17 çулсенчи ачасем хутшăнма пултараççĕ. Ӳкерчĕксене кăранташпа, тĕслĕ кăранташсемпе, фломастерпа, гуашьпа, çуллă сăрăсемпе ӳкерме юрать. Темăсем: шывра хамăра мĕнле тытмалла, вăрманта пулнă чухне мĕнле правилăсене пăхăнмалла, пушар хăрушсăрлăхĕ, çул çинчи хăрушсăрлăх. Ӳкерчĕк А3 форматлă (420 мм х 297 мм) пулмалла.

Конкурса хутшăнма заявкăсене 2013 çулхи ноябрĕн 15-мĕшĕччен йышăнаççĕ. Тулли информацие конкурс сайтĕнче паллашма пулать.

**Чăваш Ен информаци политикипе массăллă коммуникацисен министерстви.**

Ял хуçалăхĕ

# Сутлăх сĕт туса илекен хуçалăхсене – патшалăх пулăшăвĕ

**Сутлăх сĕт туса илекен ял хуçалăх производство кооперативĕсемпе агрофирмăсене, чикĕллĕ яваплăхлă обществăсене тата хресчен (фермер) хуçалăхĕсене Раççей Федерацийĕн тата Чăваш Республикин бюджечĕсенчен субсидилеççĕ. Палăртса хăвармалла, асăннă йĕркене уйрăм хушма хуçалăх тытакансем кĕмеççĕ. Субсиди уйăрас ĕçхĕл пирки тĕпленĕрех Чăваш Республикин ял хуçалăх министерствин финанспа кредит политикин пайĕн тĕп эксперт специалисчĕ О. МАКАРОВА каласа пама кăмăл турĕ:**

– Асăннă пулăшăва тивĕçессинче – çирĕп йĕрке. Ял хуçалăх министерстви чи малтан сĕт пахалăхне, вăл шутра унти çу тата белок шайне пăхать, çавăн пекех çĕр ĕне пуçне миçе пăру илни те пысăк пĕлтерĕшлĕ. Çак тĕп кăтартусем вара иртнĕ çулхинчен пĕчĕк пулмалла мар. Енчен те хуçалăхсен кăтартăвĕсем Чăваш Республикин ял хуçалăх министерстви палăртнă ятарлă условисене тивĕçтерейменççĕ пулсан укçан уйăракан пулăшăва тивĕçеймеççĕ.

Районти ял хуçалăх производство вун пĕр кооперативĕ тата «Путь Ильича» агрофирма кăçалхи пĕрремĕш кварталта 1 пин те 483 тонна паха тата пĕрремĕш сортлă сĕт сутнă, 34 проценчĕ – паха сортли. Иккĕмĕш кварталта вара 1 пин те 115 тонна е 61 процент паха сортлă сĕт сутлăха ăсатнă. Хуçалăхсен ÿсĕмлĕ ĕçĕ, тăрăшулăхĕ курăмлă. Кунта асăннă агрофирмăна, Суворов яч. хис., Чкалов яч. хис., «Оринино», «Передовик» тата ытти хăш-пĕр хуçалăха ырăпа палăртмалла.

Субсиди калăпăшĕ, паллах, пахалăхлă сĕте сутлăха мĕн чухлĕ кăларнинчен килет. Çапла вара паха сортлă сĕте сутлăха ăсатнăшăн хуçалăхсем пĕр литршăн икĕ тенкĕ çурă ытла, пĕрремĕш сортшăн сакăр вунă пус ытла субсиди илеççĕ.

Çитес вăхăтра вара услови татах та çирĕпленет, 2015 çултан пуçласа паха сортшăн кăна субсидилеме палăртнă. Апла пулсан патшалăх хуçалăхсене пахалăхлăрах ĕçлеме хистет. Юлашки вăхăта илес пулсан хăш-пĕр хуçалăхсем пахалăхлăрах ĕçлес тесе ку тĕлĕшри оборудование çĕнетрĕç.

Енчен те Чăваш Республикин ял хуçалăх министерствине бухгалтери отчетне тăратман е панкрут йышăнăвĕ пур, е конкурс производстви пуçарнă пулсан ку хуçалăхсем пулăшăва тивĕçеймеççĕ.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА калаçнă.**

# Ĕçпе ырă ята тивĕçнĕ



**Сăн ÿкерчĕкри ушкăн кулленхи ĕçре пултарулăхпа палăрса Пĕтĕм тĕнчери «Кто есть в мире кто» пысăк справочника кĕме тивĕç пулчĕ. Вĕсем – «Муркашри район тĕп больници» бюджет учрежденийĕн тĕп врачĕ Владислав Данилов, Нискасси шкулĕ çумĕнчи районти ача-пăча пултарулăх çурчĕн хушма вĕренÿ учрежденийĕн педагогĕ Маргарита Пушкарева, районти ача-пăча пултарулăх çурчĕн директорĕ Алевтина Рожкова, Муркаш шкулĕ çумĕнчи районти ача-пăча пултарулăх çурчĕн хушма вĕренÿ учрежденийĕн педагогĕ Людмила Митрофанова, Ярапайкасси шкулĕ çумĕнчи районти ача-пăча пултарулăх çурчĕн хушма вĕренÿ учрежденийĕн педагогĕ Александра Скворцова.**

**Пысăк хисепе тивĕçнине ĕнентерекен сертификата асăннă издани редакторĕ Елена Еремеева пачĕ.**

**– Эсир чăннипех те хăвăр ĕç-хĕлпе хăпартланма пултаратăр, – терĕ Елена Вячеславовна (сăн ÿкерчĕкре сулахайран виççĕмĕшĕ) асăннă ушкăна саламланă май.**

**Р. ИЛЛАРИОНОВА сăн ÿкерчĕкĕ.**

# «Ырă чун-чĕре парнеленĕшĕн Турра тав тăватăп»

Ĕç кунĕ вĕçленнĕренпе вăхăт самаях иртнĕ ĕнтĕ. Васкамасăр утрĕ З. Андреева килелле. Кăкăр ачи патне киле кайса килме тиврĕ. Хăй тепĕр çынна вăхăтра пулăшу панипе хĕпĕртесе кăмăллăн утрĕ ача-пăча тухтăрĕ.

–Засена, эп питĕ хытă ÿсĕртĕм. Эсир мĕншĕн пирĕн пата пымарăр, – хăйне хирĕç килекен амăшĕпе хĕр ача мĕн пур вăйран чупса пычĕ те, пĕчĕкскер, Зоя Алексеевнăна уринчен ыталаса илчĕ, хăйĕн чĕлхипе темĕн пакăлтатрĕ. Мăнтарăн ачи, вăл пĕлмест-ха чирлĕ ача патне тухтăра киле амăшĕн чĕнмеллине. Анчах чирлесен Зоя Алексеевна киле пырасса, вăл пырсан ачасем сываласса вара лайăх пĕлет.

Çак пĕчĕк тĕпренчĕкĕн амăшне те хăй вăхăтĕнче кипкере выртнинчен пуçласа мĕн çитĕниччене сахал мар медицина пулăшăвĕ пама тивнĕ Зоя Алексеевнăн. Шăп та лăп кăçал 40 çул çитет З. Андреева ача-пăча тухтăрĕнче ĕçлеме пуçланăранпа.

Çак таранччен вăл хăй çак çăмăл мар ĕçе суйласа илнĕшĕн ÿкĕнни пулнă-ши? Çук пулĕ. Паянхи пĕчĕк ачасен ашшĕ-амăшĕ те, аслашшĕ-асламăшĕ те – йăлтах Зоя Алексеевнăн «ылтăн» чĕрипе вăл паракан медицина пулăшăвĕ витĕр тухнăскерсем.

– Вĕсене пурне те паллатăп. Вĕсем те манпа кăмăллă. Çавăнпа мана çăмăл вĕсемпе, – тет Зоя Алексеевна хăй кун пирки.

Çынна ырă тăвас кăмăл вара унра мĕн ачаранах çирĕпленчĕ çав. Медицина ĕçченĕсен çемйинче çуралнăскер, вăхăтра панă пулăшу темрен те хаклине курса ÿсрĕ. Турай ял тăрăхĕнчи Уйкасри Алексей Иванович Иванов вăрçăра та санинструктор пулнăскер, кайран та Етĕрне (ун чух Советски районĕччĕ) районĕнче санэпидстанцинче ĕçлерĕ. Çынсене ерекен тĕрлĕ чиртен сиплес тесе чунне парса тăрăшатчĕ. Мăшăрĕ Ольга Александровна – акушеркăччĕ. Вăл вăхăтра ачасем нумай çуралатчĕç. Çавăнпа та амăшĕ çĕрле-тĕк çĕрле, ирпетĕк ирпе пулăшу пама тухса каятчĕ. 46 çул çапла акушеркăра, медсестрара тимлерĕ амăшĕ.

Пĕчĕк Зойăн та ашшĕпе амăшĕ пек пулас килетчĕ, çынсене пулăшас килетчĕ. Хăйпе пĕрлех ÿссе çирĕпленчĕ унăн çак шухăшĕ. 1966 çулта Турай шкулне кĕмĕл медальпе пĕтерчĕ те Чулхулари медицина институтне кайрĕ. Вăл çулхине 10 тата 11 класс пĕтернисем пĕрле шкултан тухнăран конкурс пысăк пулчĕ. Зойăн ĕмĕчĕ тулаймарĕ. Хĕр аптекăна ĕçе вырнаçрĕ. Вĕренес туртăм вара çулталăк хушшинче иксĕлме мар, ÿссех пычĕ. Тепĕр çулхине пуйăс çине ларса та курман хĕр Свердловск хулине чашлаттарчĕ. Çитрĕ, тупрĕ медицина институтне, вĕренме кĕчĕ. Тăрăшса вĕренчĕ хĕр. «З» пулсан стипенди пулманран кăна мар, чăн-чăн тухтăр пулас тесе тăрăшрĕ.

Йăмăкĕ те Алина Алексеевна Скворцова ашшĕпе амăшĕн, аппăшĕн çулĕпех кайрĕ: районти тĕп больницăра лаборанткăра ĕçлет.

Турă çырни те Свердловскрах çÿренĕ иккен. Пĕррехинче, 3 курс хыççăн яла таврăнсан, хĕр Свердловскра вĕреннине пĕлнĕ Алексей Андреев хĕр патне пычĕ. Вăл та унта службăра тăнă иккен. Çапла пĕр шкулта вĕренсе пĕр-пĕрне «асăрхама» ĕлкĕреймен çамрăксене Свердловск тăван ялта пĕрлештерчĕ. Пĕрре урамра курса калаçнă хыççăн каччă хĕртен урăх пĕр утăм та хăпмарĕ: Тепĕр 2 çултан çемье çавăрчĕç те – 5 курсра ача амăшĕ пулса тăчĕ Зоя. 1972 çулччĕ ун чух. Юратнă мăшăрĕ ку вăхăтра университетра истори уйрăмĕнчен вĕренсе тухса Турай шкулĕнче истори учителĕнче ĕçлетчĕ. Пулас тухтăра академи отпускне илтерттермерĕ Алексей Андреевич, хăй пăхрĕ 3 уйăхран кăшт иртнĕ хĕр ачине. Ара вĕренсе тухмалли те нумай юлманччĕ те-ха Зойăн.

1973 çулта вара Зоя Алесеевна районти тĕп больницăра педиатртра ĕçлеме пуçларĕ. Çавăнтанпа пĕр улшăнмасăр ирĕн-каçăн, çĕрне-кунне пăхмасăр, юратнă ĕçре вăл. Çак хушăра миçе çĕр ачана пулăшмарĕ пуль. Ача амăшĕсем тепĕр чух ачапа больницăна выртасшăн мар-çке. Килте те нихçан та ĕç пĕтмест вĕсен. Сахал пулнă-и тата çакăн пек çемьесене ачана укол тума çÿрени, ачасене килте сиплени. Миçе çĕр ачан амăшне канлĕх кÿмерĕ пуль вĕсен хĕр ачисемпе арçын ачисене чиртен сыватса.

– Кирек хăш вăхăтра та шăнкăравлăр, – тет Зоя Алексеевна яланах ача амăшĕсене. Кирлĕ пулсан ашшĕ-амăшне те пулăшу парать. Пĕррехинче çĕрле телефонта çамрăк хĕрарăм сасси илтĕнсе кайрĕ.

– Зоя Алексеевна, мана упăшка килтен хăваласа кăларса ячĕ. Мĕн тăвас? – йĕрет хĕрарăм.

Хĕрарăмăн 2 ача. Пĕри кăкăр та пăрахман-ха, тепри 2 çулта.

– Хам пата кил, – терĕ Зоя Алексеевна, нумай шухăшласа тăмасăр. Ара килте «тăман» кăларма пуçланă арçын та Зоя Алексеевна пăхса ÿстернĕскерех-çке.

2 кун хыççăн урăлнă упăшка арăмне шырама пуçларĕ. Мăшăрне киле илсе кайрĕ. Тепĕр 2 кунтан Зоя Алексеевна чăтса тăраймарĕ – кайрĕ çаксем патне, çамрăк арçынна пурнăç «лекцине» вуласа пачĕ. Калаçрĕ тухтăр арçынпа, ăнлантарчĕ. Çăлса хăварчĕ çемьене. Пĕрре кăна пулман вĕт ун пекки. Кама ăш сăмах калатчĕ, кама хăтăрса илме те тиветчĕ. «Мансăр пуçне вĕсене кам калать тĕрĕсне. Йăлт ман алă витĕр тухнăскерсем вĕт вĕсем. Кÿршĕ каламасть вĕт, куçран ÿкмест», – тет Зоя Алексеевна.

Çемьере вара яланах пыл та çу пулмасть çав. Çул çине сарнă вак чул çинче те малтан çуран та утма йывăр, велосипедпа та каяймастăн. Вăхăт иртнĕçемĕн çав чулсем пĕрпĕрин çумнерех вырнаçса якалса выртаççĕ, асфальт сарнă пекех пулса каять çул. Çемьери пурнăç та çаплах, хăнăхмалла пĕр-пĕрне. Кÿренсен каçарма та пĕлмелле. Кайран çав вăрçмалли сăлтав ним те мар пек туйăнать. Хĕрсе кайнă вăхăтра вара çемье саланасси патне те çитме пулать. Çулсем кайнăçемĕн вара çумри мăшăртан хаклă çын урăх çук та иккенне ăнланса илетĕн. Пĕрре уйрăлса кайсан каснă чĕлле çыпăçтараймастăн. Ун пеккине те тупаймастăн урăх. Тата ачасене амăшĕпе пĕрлех ашшĕ те кирлĕ. Арçынсен чунне те чултан туман пуль. Çапла шутлать Зоя Алексеевна.

Килте те мăшăрĕпе чашăктирĕк шăкăртаттарсан (камăн пулмасть пуль ун пекки) Зоя Алекссевна хăй те нихçан та килти «çÿпçапа» урама кăларни пулман. Нихăçан та ачасен умĕнче сив сăмах каламан упăшкине, ачасен куçĕнчен ÿкермен вăл мăшăрне. 5 ачине те вĕсем, иккĕшĕ те ĕçе юратаканскерсем, ĕçе хăнăхтарса ÿстерчĕç. Алексей Андреевич ял хуçалăхĕнче ĕçленĕ май (малтан парти райкомĕнче ĕçлерĕ, кайран нумай çул Ленин яч. хис. хуçалăха ертсе пычĕ) ир-ирех килтен тухса каятчĕ. Килти хуçалăх пĕтĕмпех мăшăрĕ çине тиенетчĕ. Зоя Алексеевна пĕчĕккĕн ачисене те ĕçе, пурнăçа хăнăхтарчĕ.

Анчах та пурнăç «ку хĕрарăм ырă кăмăллăскер, çынна нумай ырă тăвать, тĕкĕнес мар-ха ăна» темерĕ çав пурпĕрех. Çĕлен пек чашкăрса пыратчĕ те инкек сисмен çĕртен, ĕмĕр сипленейми суран хăваратчĕ. Тăшмана та сунма çук инкек курчĕ чи малтан Зоя Алексеевна. Медицина факультетĕнче вĕренекен аслă хĕрĕ Людмила 18 çултан иртсен йывăр чире пула çĕре кĕчĕ. Тамăкрах пурăнчĕ ун чухне амăшĕ. Мĕнле чăтрĕ пулĕ мăнтарăн амăшĕн чĕри?

2005 çулта мăшăрĕ Алексей Андреевич вăхăтсăр ĕмĕрлĕхех уйрăлса кайрĕ. Кĕçĕн хĕрĕ шкултан та тухманччĕ-ха ун чухне. Аслăраххисем университетра вĕренетчĕç. Аслă ачисем амăшне куçран вĕçертмерĕç ун чухне. Мĕн пĕчĕкрен çын хуйхине ăнланма, йывăр вăхăтра пулăшма вĕрентсе ÿстернĕскерсем амăшне мĕн тери йывăррине никамран лайăхрах ăнланатчĕç, ачисем вăй пачĕç амăшне.

Анчах инкек кунпах вĕçленмерĕ-ха. Тепĕр çултан амăшĕ лартнă çурт амăшĕ куçĕ умĕнче тĕппипех çунса кĕлленчĕ. Пурпĕрех çапса хуçаймарĕ пурнăç çирĕп чунлă, ăшă кăмăллă хĕрарăма. Çемьепе пĕрле кĕрсе тухмалăх çурт лартрĕç ялта. Ачисене ура çине тăратрĕ. Пурте аслă пĕлÿ илчĕç. Виçĕ хĕрĕ те халĕ банкра ĕçлеççĕ: иккĕшĕ Мускавра, тепри – Шупашкарта. Ывăлĕ те çĕр-шывăн тĕп хулинчех ĕçлет.

Нимĕнле инкек-синкек те хытараймарĕ, чуллантараймарĕ Зоя Алексеевнăн чунне. Хăйне усал тăвакана та чулпа перес йăла çук унăн.

– Çын манран пулăшу ыйтать пулсан ман ăна пулăшмаллах. Эп пулăшма пултарнă çĕртех пулăшманнипе вăл инкек-мĕн курас пулсан эп хама каçарма пултараймастăп, – тет вăл хăй кун пирки.

Çапла шутласах пулăшрĕ вăл хăйĕнчен пулăшу ыйтнă ют çынна та. Ытлашши ырă кăмăллă пулни тепĕр чухне хăйне хирĕçех килсе çапать. Шăп çапла пулса тухрĕ хальхинче. Хăй шанчăклă çын пулнăран çынсене те шанать, ĕненет вăл. Анчах та пурте тÿрĕ чунлă мар иккен. Суя çур пурнăç тенине тĕпе хурса пурăнакансем те пур иккен.

Апла пулин те урăхла пулма пултараймасть Зоя Алексеевна.

– Тав Турра мана çавăн пек ырă чун-чĕре панăшăн, – тет Зоя Алексеевна.

Çакăн пек тепĕр ен пур Зоя Алексеевнăн. Хăй суйма юратманскер, çапла тăвакансене вара вăл каçарма пултараймасть.

– Телейлĕ-и эсир, – тесе ыйтсан ним шухăшласа тăмасăрах вăл çапла хуравларĕ:

–Телейлĕ. Телей вăл – сывлăх, ача-пăча пурри, вĕсем тĕрĕс-тĕкел пулни, ачасен савăнăçĕ, вĕсем телейлĕ пулни. Çухатас марччĕ вĕсене.



Çак пысăк телее каярахпа мăнуксенче куратпăр, – тет ырă кăмăллă тухтăр.

«Аннеçĕм, упра хăвна, – теççĕ Зоя Алексеевнăна ачисем. Амăшĕ вара вĕсене çапла хуравлать,

– Эсир хăвăр лайăх пурăнăр, сирĕн йĕркеллĕ пулсан манăн та веçех лайăх пулать, – тет.

– 5 ача çитĕнтерсе вăхăтра хăвна тимлĕх уйăраймарăн пулĕ. Сахал ачаллă çемьепе нумай ачаллине танлаштараймастăн вĕт. Халĕ те пулсан тулли пурнăçпа пурăн, аннеçĕм, – теççĕ 3 хĕрĕпе ывăлĕ ăна. Кашни çуралнă кунне асăнмалăх туса параççĕ ачисем Зоя Алексеевнăна. Кашни çул ăçта та пулин канма яраççĕ.

Зоя Алексеевна çав вăхăтрах мăшăрĕ Алексей Андреевич ачисем ура çине тăнине кураймannишĕн питĕ пăшăрханать. Çывăх çынсемпе пĕрле пурăннине нимĕн те çитмест. Укçа-тенкĕ çитменни, ытти пăтăрмахсем çакăн пек пысăк телей çумĕнче ниме те тăмаççĕ.

Тата Зоя Алексеевна 40 çул хушши юратнă, чун килĕштернĕ ĕçре ĕçленĕшĕн, хăйĕнпе пĕрле лайăх çынсем пулнăшăн та хăйне телейлĕ шутлать.

– Хам район больницинче лайăх коллективра ĕçленĕшĕн çав тери савăнатăп. Çавăнпа та хамăн тăвансене, юлташсене, кÿршĕсене тата пĕрле ĕçлекенсене пурне те чĕререн тав сăмахĕ калас килет. Пурне те ырлăх тата сывлăх сунас килет, – тет Зоя Алексеевна.

Мĕнех хушса калайăн кунта. Пурăннă чух çывăх çынсене хакласа, юратса пурăннине мĕн çиттĕр. Кун пек чухне пурăнас килсех пурăнатпăр. Çапла пулмалла та. Çакă пуль çав вăл – телей.

**Л. ПАВЛОВА.**

# Л. МАЙКОВА: «Ĕмĕрĕпех халăхпа тата халăхшăн»

## Çĕр пин юрă çĕр-шывĕнче – 100 çул

**Хуçалăх экономики, предприяти аталанăвĕ, пĕрле пулса ыранхи куна пăхни. Пурин хыçĕнче те ĕç тăрать: пĕри – пуриншĕн, пурте – пĕриншĕн. Çак çыхăну Муркаш енре аслăрах ăрусем пуçарнипех ыра йĕркере. Экономика хутшăнăвĕсен çĕнĕ тытăмĕнче те татса паман ыйтусем, пĕрле пулса тумалли йышăнусем çук мар-ха. Хамăр ентешсем пысăк юбилее уявланă май Мăн Сĕнтĕр райпо канашĕн ертӳçине, Чăваш Республикин халăх ыйтăвĕсене тивĕçтерес сферăн тата Раççей Федерацийĕн суту-илĕвĕн тава тивĕçлĕ ĕçченне Людмила МАЙКОВĂНА калаçăва чĕнтĕм.**



**– Людмила Петровна, Пĕтĕм тĕнчери кооперативсен кунĕ кăçал Мăн Сĕнтĕр райповĕшĕн хăйне евĕрлĕхпе палăрса тăрать. Асăннă куна тата Чăваш Республикинчи потребительсен кооперацийĕ йĕркеленнĕренпе 120 çул çитнине уявланипе пĕрлех сирĕн коллектив хăйĕн 100 çулхи юбилейне паллă тăвать. Мĕнле ӳсĕмсемпе кĕтсе илетĕр ăна?**

– Эсир калани пĕтĕмпех паянхи кун йĕркинче. Мăн Сĕнтĕр райповĕ уявсем уявланă хушăрах историе манмасăр мĕн пурнăçланипе тивĕçлĕ мăнаçланса малалла пăхать. Çак çулпа пырса çĕнĕ тĕллевсем палăртать, вĕсене çул парса ял çыннисен пурнăçне çĕнĕ сĕм кĕртет.

Истори тенĕрен. Мăн Сĕнтĕр тăрăхĕнче малтанхи потребитель кооперативĕ 1913 çулта йĕркеленнĕ. Пĕрремĕш кунранпах пурнăçпа тан пыма çул илнĕскер вăхăт иртнĕçемĕн аталанса, вăй илсе пынă, хăйĕн пĕлтерĕшне ӳстернĕ. Çапла йĕркеленнĕ Мăн Сĕнтĕрти потребительсен обществи юлашки çулсенче тăтăшах Чăвашпотребсоюз системинче те, Раççейри Центросоюз тытăмĕнче те малтисен ретĕнче. Çак ӳсĕм – пирĕн райпона кĕрекен ялсенче пурăнакансен, пире таварпа тивĕçтерекенсен тата райпо ĕçченĕсен пĕрлехи ĕçĕ. Эпир паян районти 79 яла пăхса тăратпăр. Пирĕн пулăшупа пĕтĕмпе 12 пин ытла çын усă курать. Вĕсен ыйтăвĕсене туллин тивĕçтерессине хамăрăн тĕп ĕç тесе шутлатпăр. Çавна курах çĕнĕлĕхсене алла илсе пыратпăр: ялта пурăнакан хăйне пĕччен ан туйтăр. Хамăр ума лартнă тĕллевсене пурнăçласа эпир иртнĕ çул çеç район бюджетне 22 миллион тенкĕ тĕрлĕ налук тӳлерĕмĕр. Пирĕн ĕçе ку енчен пăхсан райпо тытăмне аталантармалла çеç.



*Василий Алексеевич КОЛБАСОВ (1934 – 2003) Мăн Сĕнтĕр райпоне 1978 – 2003 çулсенче ертсе пынă. Вăл – Чăваш Республикин тата Раççей Федерацийĕн суту-илĕвĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ.*

**– Кунта кăçалхи пĕрремĕш çур çулхи ĕçсене пĕтĕмлетни вырăнлă пулассăн туйăнать.**

– Сирĕнпе килĕшетĕп. Кăçалхи пĕрремĕш çур çулта эпир черетлĕ ӳсĕм турăмăр: 6 уйăхра пĕтĕмĕшле тавар çаврăнăша 169659 пин тенкĕне çитертĕмĕр (иртнĕ çулхин 112 проценчĕ). Суту-илӳ сферинче конкуренци çулсерен вăй илсе пыни пуçаруллăрах пулма ыйтать. Çакна Мăн Сĕнтĕри «Стройхозтовары», «Культтовары», «Гастроном», «Дружба» магазинсен коллективĕсем, Калайкассинчи, Сыпайри, Мăн Шашкарти, Тренккăри, Мăн Хураçкари, Мăн Тутаркассинчи магазинсенче ĕçлекенсем ăнланса ĕçлесе пыраççĕ. Ытти коллективсем те вĕсенчен юлмаççĕ. Вĕсен тăрăшулăхĕпе суту-илĕве тивĕçлĕ шайра тытса пыма май пур та.



**Хатĕрлев кантурĕнчи склад заведующийĕ Валентина Артемьева хатĕрлев ĕçĕнче 35 çул. Ял çыннисене тырă авăртса парассине те алла илнĕ вăл.**

**– Суту-илӳри ӳсĕмсем обществăлла апатлану предприятийĕсене те хăйсенчен катара хăвармаççĕ пулас?**

– Ку тĕрĕсех. Пĕрремĕш çур çулта райпо тытăмĕнчи обществăлла апатланăвăн тавар çаврăнăшĕ пĕлтĕрхи çак вăхăтринчен 10,2 процент ӳсрĕ, 26666 пин тенкĕне çитрĕ. Çак сферăра ĕçлекенсем умĕнче тăракан тĕп тĕллев – харпăр хăй производствинчи продукцие реализацилессине пысăклатасси. Кунти ĕçченсен тăрăшулăхне тивĕçлипе хаклама пулать. Ĕç кăтартăвне ӳстерме кунта çĕнĕ технологисемпе ĕçлени пулăшать. Вĕсене вăхăтра алла илнĕрен «Нарспи» кафе ĕçченĕсем (Л. Гавриловăпа З. Михайлова поварсем тата кафе ертӳçи В. Моисеева), «Шуçăм» кафери аслă кондитер Л. Сапожникова, «На рынке» кафери аслă повар Н. Бычкова, «Пиццерия» кафене ертсе пыракан В. Ивановская мал туртăмлă ĕçлесе пыраççĕ, ыттисемшĕн ырă тĕслĕх пулса тăраççĕ.

**– Эпĕ пĕлнĕ тăрăх хатĕрлев ĕçĕпе те Мăн Сĕнтĕр райповĕ пĕр вырăнта тăмасть. Тăтăшах шыравра эсир. Уявра кунти ӳсĕмсем пирки мĕн калайратăр?**

– Хатĕрлев ĕçне эпир кунсерен майлах уйрăм тимлĕхре тытатпăр. Тĕллевлĕ тимлĕх уйăрнин усси пурах. Кăçалхи пĕрремĕш çур çулта хатĕрлев ĕçĕсене çулталăк каяллахинчен 22 процент иртте рсе пурнăçларăмăр. 2013 çулхи 16639 пин тенкĕ пĕлтĕрхи çак вăхăтринчен 3020 пин тенкĕ ытларах. Çак тапхăрта уйрăммăн илсен халăхран 550 тонна аш-какай, 591 тонна сĕт, пĕлтĕрхинчен 1,5 хут нумайрах пахча çимĕç тата 3 хут ытларах тир пуçтартăмăр. Ку вăл пирĕн ĕçĕн пĕр пайĕ кăна. Кивĕ хут, эмел курăкĕ пухасси, çынсене тырă авăртса парасси т. ыт. те – кун йĕркинчен тухман ĕçсем.



**Мăн Сĕнтĕрти хуçалăх таварĕсен магазинĕнче ĕçлекенсем (сулахайран сылтăмалла): Н. Горшкова сутуçă, Г. Еруханова заведующи, Е. Грачева сутуçă ĕçри хастарлăхпа тавар туянакансен кăмăлне тивĕçтереççĕ.**

**– Хăвăр производство çинче чарăнса тăрсан тата...**

– Ку ене те хамăр райпо пурнăçĕнче тĕп вырăнта тытатпăр. Январь – июнь уйăхĕсенче пирĕн райпо çулталăк каяллахинчен 1231 пин тенкĕлĕх продукци ытларах туса кăларса реализацилеме пултарчĕ: пĕтĕмпе 18753 пин тенкĕлĕх. Кунта «Сундырь-Хлеб» общество мал туртăмлă пулнине палăртассăм килет. Вĕсем тăтăшах шыравра пулни тавар туянакан патне çĕнĕрен те çĕнĕ продукци çитерме май парать.

